16-мӗш ҫул тухать

# КАПКӐН

№ 11 ИЮНЬ, 1940 ҫул

„Чӑваш Коммунӗ“ ҫумӗнче тухать




— Пӑхатӑп та ҫак завод ҫине, тӗлӗнетӗп ...

— Мӗнех тӗлӗнмелли пур вара унта?

— Ара, ҫирӗм ҫул хушшинчех ҫавӑн пысӑкӑш ӳснӗ те вӑл, а тепӗр ҫирӗм ҫултан мӗн чухлӗ ӳсӗ ...

Обязательный экземпляр
Доставлен
Чувашской Книжной Палате 19 г.

# КУЛАТПĂР

Н. Сверчков ÿкерчĕкĕ.



Паян, ытти кунсенчи пекех, чăваш çĕршывĕнче сывлăхлă та вăйлă чăваш çыннисен савăнăçлă та уçă кулăшĕ янăрать... Мĕншĕн тесен... (*Малалла вула*).

# УНĂН ÇУЛĔ ВĔÇЛЕННĔ

(Киввипе Çĕнни калаçни)

— Çирĕм икĕ çул эпĕ хамăн ĕмĕте çухатмасăр пурăнтăм. Çирĕм икĕ çул эпĕ Вурмсемпе Брутсем чĕрĕлессе кĕтрĕм. Анчах вĕсем чĕрĕлмерĕç. Вĕсем ĕмĕрлĕхех çухалчĕç пулмалла...

Çапла каланă Павăл ятлă çын, ĕлĕкхи саманаран хăйпăнса юлнăскер, хăйпе пĕрле карап çинче ларса пынă çынна.

— Конешнă,—тенĕ Варламĕ,—вĕсем чĕрĕлме те пултарайман, мĕншĕн тесен вăтам ĕмĕре каялла тавăрма ĕмĕтленни вăл питех те кулăшла япала. Истори, пĕтĕмĕшпе илсен, каялла каймасть, вăл малалла каять. Мĕн пулса иртнĕ, вăл тепĕр хут пулмасть. Камăн пурнăçĕ вĕçленнĕ, вăл тепĕр хут пурнăç пуçлаймасть. Эпир вилетпĕр—пирĕн вырăна çĕнĕ çын çуралать, унăн çĕнĕ йăла, çĕнĕ пурнăç пулать. Кивви пĕтиччĕнех Çĕнни çуралать те, Киввине хĕссе пăчăртать, вĕлерет. Çапла вăл—пурнăç законĕ.

Павăл кăсъинчен пирус кăларса чĕртсе янă. Вăл хăйĕн хĕсĕк куçлăхĕсем витĕр пĕрре Варлам çине, тепре карап хыçне тăрса юлакан хумсем çине пăха-пăха илнĕ. Варлам, кĕтесре хĕсĕнсе ларакан Павăл çине шăтарса пăхса, хăйĕн сăмахне малалла тăснă.

— Авă эсĕ хумсем кĕрешнине куратăн,—тенĕ вăл.—Çав хумсем пекех, пурнăçра та тĕрлĕ вăйсем кĕрешеççĕ. Яланах тенĕ пек, икĕ хире-хирĕç тăракан вăй хушшинче кĕрешÿ пырать. Вăл кĕрешÿре пĕри те пулин çĕнтеретех. Пуринчен ытларах Çĕнни çĕнтерет, Кивви вăхăтлăха кăна тата сайра хутра çеç çĕнтерме пултарать. Анчах Çĕнни пĕрре çĕнтерчĕ пулсан, вара Кивви нихăçан та урăх чĕрĕлеймест. Мĕншĕн тесен, пурнăç малалла аталаннă май, вăл пурнăç кустăрмине кансĕрлекен чăрмав пулса тăрать, пурнăçа каялла туртать. Çавăнпа ăна пурнăç пурпĕрех таптатса каять.

Павăл сиксе тăнă. Пĕр çавар тĕтĕме çăтса янипе чыхăнса кайнă та, вăл кукăрălса ларсах ĕсĕхленĕ. Каютăра ăна пăчă пулнă. Вара вĕсем палуба çине тухса тăнă.

— Конкретнăрах калаçар,—тенĕ Павăл палуба çинчи карта çине сĕвĕнсе,—Фейербах тĕрĕс калать-и, е Беркли тĕрĕсрех калать-и текен ыйтупа тавлашни усăсăртарах пулĕ. Илер акă хамăрăн конкретлă пурнăçа. Халĕ сирĕн, ман шутпа, çитменлĕхсем чылаях-ха. А вĕт ĕлĕк апла пулман. Ĕлĕк çителĕклĕ пулнă. Апла пулсан мĕнле вывод тухса тăрать-ха? Пĕр вывод кăна пулма пултарать: Кивви Çĕннинчен лайăхрах пулнă. Вăл çеç те мар, Кивви лайăхрах пулсан, вăл вăйлăрах та пулмалла, çавăнпа вăл çĕнтермеллех. Хăвăрах пĕлетĕр пулĕ, историре çапла пулать: пĕр-пĕр вăйлă çил килсе пÿрте пĕтĕмĕшпех ишĕлтерсе антарать, ăна хуçисем çил иртсе кайсанах тепĕр хут туса лартаççĕ. Пÿртĕн пахалăхĕ те, форми те малтанхи пекех пулса ларать, мĕншĕн тесен ăна малтанхи материалсенченех туса лартнă. Паллах, кăшт-кашт çĕнĕ япаласем унта хутшăнма пултараççĕ, анчах пĕтĕмĕшрен илсен вăл малтанхи пекех пулать. Çавăн пекех обществăпа та пулма пултарать, пулмалла та...

Çакна каланă та Павăл мăнаçлăн тăхтаса тăнă. „Варламăн мана хирĕç каламалли нимĕн те пулмасть", тесе шутланă вăл. Хумсем карапа чÿхентернĕ май, вăл унталла-кунталла тайкаланса тăнă.

— Анчах эсĕ калани чăнлăхпа килĕшсе тăмасть,—тенĕ Варлам ăна хирĕç.—Эсĕ механист пулсан, паллах ĕнтĕ, эсĕ калани те хăшпĕр таран тĕрĕс, мĕншĕн тесен механистăн механистлах каламалла, механистăн шухăшĕ те механистлах пулмалла. Анчах, чăнлăхпа механизм хушшинче пысăк уйрăмлăх пур. Чăнлăх пĕр çулпа пырать, механизм—тепĕр çулпа. Унсăр пуçне тата, эсĕ тĕнче çине идеалистла пăхатăн, идеализмпа материальнăй тĕнче хушшинче те пĕрлехи нимĕн те çук.

Пуçлар акă çитменлĕхсен ыйтăвĕнченех. Тĕрĕс, ĕлĕк „çителĕклех" тата ытлашши те пулнă. Анчах камăн? Сирĕн вĕсем ытлашшипех пулнă, складсемпе амбарсенче те çĕрсе выртнă, пирĕн вара вĕсем пачах та пулман. Эпир выçăллă-тутăллă пурăннă, çĕтĕк-çатăк çÿренĕ. Таварсене ытлашшипех тытакансем, тепĕр майлă каласан, эсир, çĕршерĕн кăна пулнă; эпир вара, таварсăр тата выçăллă-тутăллă пурăнакансем, миллионсемпе шутланнă. Çапла вара, эпир хăюллăнах: ĕлĕк пĕтĕм общество выçăллă-тутăллă пурăннă, теме пултаратпăр. Мĕншĕн тесен общество, пуринчен ытла, пирĕнтен тăнă. Халĕ сирĕннисем çук, вĕсене хăваласа янă, пĕтернĕ. Эпир хамăр тунă япаласемпе хамăр хуçа. Вĕсене пирĕнтен туртса илекенсем çук. Эпир халĕ хамăршăн, хамăрăн интересcемшĕн ĕçлетпĕр, харам-пырсемшĕн мар. Тепĕр енчен, санран çакна ыйтас пулать: пиншерĕн те миллионшарăн ĕçсĕр пурăнакансем, хутаç çакса ялсем тăрăх ыйткаласа çÿрекенсем, пурăнма кĕтес çук пирки урамсенче, кĕперсем айĕнче йăвансa çÿрекенсем, çав вăхăтрах теприсем ытлашши алхасса пурăнни хăçан пулнăччĕ вара вăл? Ĕлĕк марччĕ-и? Капиталистсем хуçа пулнă çĕршывсенче халĕ те çаплах мар-и вара? Ăста кунта çителĕклĕ тени? Тепĕр майлă каласан тĕрĕсрех пулмасть-и? Çапла ĕнтĕ, пĕрремĕш вывод: ĕлĕк çĕршер çын тулăх пурăннă, миллионсем выçă ларнă, çĕтĕк çÿренĕ; халĕ миллионсем тулăх пурăнаççĕ; сирĕннисем вара, ĕçлеме юратмансемсем тата çын ĕçĕпе пурăнма хăнăхнăскерсем, çиеймеççĕ. Çапла тăрать ĕç чăнлăх енчен илсе пăхсан. Çапла ĕнтĕ Кивви мар, Çĕнни лайăхрах, çавăнпа пирĕн Çĕннине тĕреклетессишĕн тăрăшмалла.

Илер тата Кивви çĕнтермелле тенĕ ыйтăва. Эсĕ кунта пÿрте тепĕр хут туса лартнин тĕслĕхне илсе кăтартрăн. Анчах кунта та чăнлăхпа килĕшмен вырăнсем туллиех, мĕншĕн тесен обществăпа пÿрт пĕр мар. Обществăра Çĕнни Киввине çĕмĕрет пулсан, унта вара кивĕ пахалăх та, кивĕ форма та пĕтет, çĕнĕ пахалăхпа çĕнĕ форма çуралса тухать. Калăпăр, пÿрт пушар пулнипе çунса кайсан, унăн кивĕ пахалăхĕпе кивĕ форми пачах та пĕтеççĕ. Çав пÿрт кĕлĕнчен вара текех пÿрт туса лартма çук. Пÿрте çил ишĕлтернĕ чухне механизмлă улшăнусем кăна пулса иртеççĕ, пĕр пахалăх пĕтсе çĕнни çуралмасть. Çавăнпа та ăна обществăри революципе ниепле те танлаштарма çук, мĕншĕн тесен революци пĕр пахалăхран тепĕр, çĕнĕ пахалăх туса хурать. Общество законĕсем тăрăх, тĕнчере яланах Кивви вилсе пырать, ун вырăнне яланах Çĕнни çуралать. Кивви хăех Çĕнни валли условисем хатĕрлет, хăйĕн вилĕмне çывхартса пырать. Çавăн пек тăрать ĕç сирĕн капитализмлă системăпа та. Халлĕхе вăл пирĕн çĕршыв тулашĕнче пурăнать пулсан та, ун кунçулĕ кĕскелсе пырать, вăл ăшран çĕрет. Çĕнни ăна валли тупăк хатĕрлет.

Е тата эсĕ: Кивви вăйлăрах, тесе калатăн. Пирĕн умра, калăпăр, икĕ хурама: пĕри—авалхи, теприçамрăкки. Авалхин ăшĕ çĕрĕк, çамрăккин сĕткен тапса тăрать. Хăшĕ вăйлăрах пулĕ тесе шутлатăн эсĕ? Кун пек танлаштарни те ĕнтĕ сирĕн шухăша сирсе пăрахать. Çитменнине тата, эсĕ вăтам ĕмĕр патнелле туртатăн, вăл ĕмĕрĕн халĕ пирĕн çĕршывра тымарĕ те юлман. Çавăнпа та санăн ĕмĕтÿсен никĕс çук, никĕссĕр вара—çуртйĕре лартма çук. Куратăн ĕнтĕ, санăн шухăшсем пачах та тĕрĕс мар.

Павăл хăйĕн вăйсăрлăхне туйма пуçланă. Вăл шăртланнă çемĕн шăртланма тытăннă.

— Эсĕ каланипе килĕшме çук.—тенĕ вăла чĕтрекен сасăпа,—мĕншĕн тесен Çĕнни Киввисĕр пулма пултараймасть. Ăста Çĕнни пур, унта яланах Кивви те пур.

Варлам та хĕрÿлленсе пынă. Вăл Павăл патнерех пырса хытăраххăн калама тытăннă.

— Тĕрĕс,—тенĕ Варлам,—Çĕнни Киввисĕр пулмасть, ăста Çĕнни пур, унта хăшпĕр вăхăтлăха Киввин юлашкисем те пулаççĕ. Анчах вĕсем йĕкĕрешсем пек пĕр-пĕрин хыççăн туслăн çÿремеççĕ. Вĕсен хушшинче вирлĕ кĕрешÿ пырать. Вăл кĕрешÿре яланах Çĕнни Киввине çĕнтерсе, пĕтерсе пырать. Çавăнпа сирĕн кунçул та ĕнтĕ вĕçленнĕ. Эпир сире пĕтерсе, тĕп туса пыратпăр. Çапла вара, хамăр çĕршывра эпир тулли çĕнтерÿ туни пирки ним иккĕленÿ те пулма пултараймасть.

Павăл персе амантнă тăмана пек пăхса тăнă. Унăн Варлама хирĕç аргументсем шырамалла пулнă, анчах вĕсем пулман. Çавăнпа вăл пĕр ыйтуран тепĕр ыйту çине куçса пынă.

— Калăпăр,—тенĕ вăл,—ку ыйтупа эпир тĕрлĕрен шухăшлатпăр. Илер акă тата нацисем тĕлĕш-

пе тăракан ыйтăва. Кунта та Кивви вăйлă-ха. Вĕсем халĕ те кивĕ формăпах тумланаççĕ, кивĕ йăласемпех тенĕ пек пурнаççĕ. Çĕнни вара кунта чылай вăйсăртарах. Тепĕр енчен, пур нацисене те пĕрлештерсе, эсир вĕсене моральнă хĕсĕрлетĕр...

Павăл каласа пĕтерессе Варлам чăтаймасăр кĕтнĕ. Çав самантрах Павăла пӳлсе, хăй калама пуçланă.

— Çук, тĕрĕс мар,—тенĕ вăл.—Кунта та пурнăç пĕтĕмпех улшăннă. Талккишпех колхозсем туни, классене пĕтерни, турра ĕненес йăла пĕтсе пыни, кивĕ хăнăхусем çухалса пыни, суха пуç вырăнне—трактор, çурла вырăнне—комбайн йышăнни, килте тунă пир вырăнне ытларах та ытларах пусма-тавар йăлана кĕрсе пыни, çăпата вырăнне сăранпа çăм йышăнни,—çаксем вара çĕннисем мар-и вĕсем? Мĕн юлнă-ха кунта кивви? Чĕлхере те ĕнтĕ пысăк революциех пулнă. Илер акă чăваш халăхнех. Вăл автономи илни кăçал çирĕм çул тултарчĕ. Çапла вара вăл революцие пула кăна политикăллă, экономикăллă тата моральнăй ирĕк илнĕ. Çав ирĕке илнĕренпе, Чăваш республикинче те йăлтах Çĕнни çĕнтерсе илчĕ. Киввинчен тĕпренчĕксем кăна юлчĕç. Ĕлĕк, эсир пулнă чухне, чăваш халăхĕ трактор, комбайн, автомобиль ятне те пĕлмен. Халĕ вăл хăй çав машинăсене ĕçлеттерет, унăн вăл машинăсем пиншерĕн шутланаççĕ. Ĕлĕк чăваш çамрăкĕсем авланнă чухне те килти пиртен çĕленĕ шаравар тăхăннă. Халĕ нумайĕшĕ яланах пусма-тавар, атă-пушмак тăхăнса çӳреççĕ. Ĕлĕк ялсенче чиркӳсем нумай лартса тухнă, халĕ вĕсем пачах та çук, вĕсен вырăнне шкулсемпе больницăсем йышăнчĕç. Ĕлĕк тĕттĕмлĕх, культурăсăрлăх, трахома пулнă,—халĕ вĕсем вырăнне культурăллăх йышăнчĕ, трахомăна йăлтах пĕтерсе пыратпăр. Ăçта кунта Кивви? Вăл майĕпенех пĕтсе пыни паллă мар-и ĕнтĕ? Чи кирлисене: талккишпех колхоз тунине, классене пĕтернине, çĕршыва индустрилесе пынине шута илсен, эпĕ хăюллăнах тата çирĕппĕнех çапла калама пултаратăп: ку ыйтура та Киввин кунçулĕ пĕтсе пырать, кунта та Çĕнни çĕнтерсе илнĕ.

Эсĕ тата „моральнă хĕсĕрлени“ çинчен калаçатăн. Пуçлар ĕлĕкхинчен. Ĕлĕк нацисем пĕр-перинпе хирĕçсе пурăннă. Тутар чăваша курайман, чăваш тутара кураймаи. Çакă вара сирĕншĕн питех те усăллă пулнă, мĕншĕн тесен çав нацисене кашнине уйрăмăн хĕссе пыма, пусмăрлама сире çăмăлтарах пулнă. Çапла пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе, эсир вĕсене халăхсен тĕрминче тытса усрана. Пĕр енчен вĕсене царизм пусмăрланă, тепĕр енчен хăйсен нацилле буржуазийĕ пусмăрланă. Вĕсен çĕрĕ, завочĕ пулман—вĕсене экономика тĕлĕшĕпе пусмăрланă. Вĕсен нимĕнле право та пулман—вĕсене политикăпа мораль тĕлĕшпе пусмăрланă. Ăçта кунта ирĕклĕх? Ăçта кунта мораль? Чăн та, сирĕн, буржуйсен, ирĕклĕх пулнă пулĕ, анчах пирĕн, миллионсен, пулман вăл. Çакна ĕнтĕ эсĕ мораль тетĕн пулсан, вара мораль сăмаха пачах та пĕтерсе лартатăн. Халĕ мĕнле? Халĕ тутар чăваша хисеплет, чăваш тутара хисеплет. Вĕсем пĕр-пĕринпе туслă пурăнаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен—пĕр ĕмĕт, пĕр тĕллев. Вĕсене пусмăрлакансем çук. Вĕсем хăйсен пурнăçĕпе хăйсем хуçа. Вĕсен, çав нацисен, çĕр пур, фабрик-заводсем пур—вĕсене экономика тĕлĕшпе пусмăрлани çук. Вĕсен суйлав прави, ĕçлев прави, кану прави, вĕренӳ прави пур—вĕсене политикăпа мораль тĕлĕшпе хĕсĕрлени çук. Халĕ мораль—миллионсен моралĕ пулса тăчĕ. Çавăнпа та пур нацисем те политикăпа мораль тĕлĕшĕнчен çирĕп пĕрлĕх туса хучĕç, пĕр çул çине тăчĕç, пĕр тĕллев патнелле пыраççĕ. Çавна май вара, пĕр-пĕринчен уйăрлса тăма вĕсен нимĕнле интерес та, нимĕнле сăлтав та çук. Çакна вара интернационализм, пролетариллĕ мораль теççĕ. Вăл мораль сирĕн морале тахçанах ĕнтĕ таптаса тăкнă. Туятăн пулĕ, каллех Çĕнни вăйлăрах, каллех Кивви пĕтсе пырать.

Пĕлетĕн пулсан, Çĕнни умĕнче тăракан хăшпĕр таран вăйлăрах Кивви вăл—ăстăн тĕлĕшĕнче. Кашни çынăн пуçĕнче халĕ Киввипе Çĕнни кĕрешеççĕ. Кивви вара кунта чылаях вăйлă. Анчах çапах та Çĕнни кунта та çĕнтерсе пырать, вăл татăкланах та çĕнтерĕ...

Çак тĕлте калаçу таталнă, мĕншĕн тесен Павăлăн, вăл сывă мар пулнă пирки тата пĕрмай тайкаланса тăнипе, пуçĕ çаврăнса, ăшĕ пăтранса килнĕ. Ăна антарса хăварнă. Унăн çулĕ ĕнтĕ вĕçленнĕ.

**ИСКЕНТЕР.**

# ПОРТРЕТСЕМ КАЛАÇНИ

**Салтыков-Щедрин**: Тарас Григорьевич, эсĕ хăвăн дневникунта Шупашкар çинчен çапла çырнăччĕ: „Питĕ пĕчĕк, анчах илемлĕ хула. Ытларах мар пулсан, сахалтан та çурри унта çуртсем мар, чиркӳсем. Пурте Мускав архитектурипе тунисем. Кама валли тата мĕншĕн тунă вĕсене? Чăваш валли-шим? Çук, православи валли Мускавăн шалти политикин тĕп çăмхи—православи“, тенĕ. Халĕ çав хулара санăн „Кобзарь“ кĕнекӳне чăвашла кăларнă.

**Шевченко:** Мĕншĕн тесен эпĕ хамăн пĕр сăвămра:

„Ирĕк, çĕн çемье тусассăн
Ăшшăн та йăвашшăн
Аслă çемьере ан манăр
Мана асăнмашкăн“,

тесе çырнăччĕ. Эсĕ ху тата „Благонамеренные речи“ ятлă произведенире çапла çырнăччĕ: „хăйĕн çуралнă çĕршывĕн чиккисене те пĕлмен, сĕмсĕр, çурма-тискер Шупашкар çынни“ тенĕччĕ.

**Салтыков-Щедрин**: Эпĕ те сан пекех тепĕр тĕлте çапла каланăччĕ: „Шупашкар та çутта тухас процесс çаврăнса илнипе улшăнма пултарать“ тенĕччĕ. Большевиксем пулассине пĕлнĕ пулсан, ытларах та калană пулăттăм.

# Чăваш халăхĕн хаяр тăшманĕсем—чăваш националисчĕсем çапла палканă



1. — Ку стройкăна вĕсем, паллах, тăваймаççĕ. Ну, пĕр этажне тăвĕç те тума чарăнĕç.



2. — Эпĕ те сан пекех шухăшлап. Сăмахпа тума çăмăл. Сăмах вăл—кирпĕч мар. Кирпĕчи çук вĕсен,



3. — Ĕç кирпĕчĕре кăна мар. Йывăрлăхсем тупăнса пырĕç. Туса пĕтерейместех. Курăн ак!



4. — Эпĕ те çавнах калатăп. Энтузиазм, хăвăртлăхсем, теççĕ! Эх, ачам, сăмахсем çеç-ха! Асăнăн ак. Эпĕ пакăлти мар.



5. Ай, тур-тур! Туса пĕтернĕ те. Мĕне те пулин шута илеймерĕмĕр пулĕ эпир... Мĕне шута илейменни çинчен каялла аннă хушăра... калаçса пăхăпăр.

# МАКАР ДОКЛАЧӖ

— Çук, Хветӗр Хветӗрч, пулмасть манран. Вӑтӑ эпӗ. Унта вӗт таçтан çӗр миминчен пуçласа йӗркипе каласа пымалла. А эпӗ мӗн? Эпӗ вӗлерсен те ун пек пултараймастӑп. Халлап тавраш пулсан татахчӗ хӑть. Çук, урӑхне хуш, - терӗ пуçне пӑркаласа Макар мучи.

— Çынсем тунине неушлӗ эсӗ тӑваймастӑн?

— Ну, ладнӑ. Юрать,—питлӗх пек сӑмсаллӑ картусне каçӑртса лартса тухса утрӗ Макар. Çула май, Ваçук патне калаçса ларма кӗчӗ. Ваçук патӗнче çынсем чылай: Уплинке Караçӑмӗ, Яшка Давичӗ, Купӑста Иванӗ тата ыттисем те.

— Ну, мана тыттарчӗ те Хветӗр. Тем тумалла. Сирӗн пата кӗрсе калаçас терӗм.

— Мӗн пулнӑ? Мӗн?

— Доклад тумалла. Чӑваш автономийӗ çирӗм çул тултарни çинчен...

— А-а, доклад тӑвасси мӗн вӑл? Эпӗ тем пулнӑ тесе. Эсӗ карӑнарах тӑр та, хулӑмрах сасӑпа карлаттар кӑна. Сывлӑш çавӑрса ил те, каллех яра пар. Сайра хутра ӑхм! тесе тачкан ӳсӗрсе илкеле. Хӑш чухне чышкӑна çӳлелле йӑтса çил арман çунатти пек çавӑркала.

— Доклад тӑвасси мӗн! Ним те мар. Мана пӗррере Шупашкарта купӑста вӑйлӑ туса илни çинчен доклад тутарчӗç. Ничево. Малтан шиклентӗм... Кайран, мӗн пулин пулӗ, карлаттарас, терӗм. Çырса пыраççӗ. Ну, ятӑм та вара. Умма пӗри стаканпа çутӑскер илсе пырса лартрӗ. Ку мана хастарлантӑр тесе хӗрмеллӗх эрех илсе килсе пачӗ пуль, тесе стакана тытрӑм те шанк! анчах ӗçсе ятӑм. Тьфу! шыв, шуйтан. Тата тепре илсе пырса пачӗç. Ӑна та янклаттартӑм. Вӑл та шыв. Ара кусем шыв ӗçтерсе кӳпӗнтерсе яраççӗ вӗт, тетӗп. Çав вӑхӑтрах пӗри эпӗ икӗ стакан ӗçсе янине курсан: мӗн стаканпа тултараттӑр, илсе килӗр графинпах, терӗ. Пырса пачӗç. Вара урӑх ӗçмерӗм. Стой, шыв ман килте те нумай, терӗм,—юмах пек каласа кӑтартрӗ Купӑста Иванӗ—пахча-çимӗç тӑвакансен бригадирӗ.

— Полошӑм, эсӗ, Купӑста, эрех пирки тыттаратӑн та пулӗ. Сана мӗне курса доклад тунӑ чух эрех пырса парӗç. Шыв панине пӗлнех ӗнтӗ.

— Ну, кӑшт тытгартӑм. Кӑшт шута кӗмест вӗт!—кулса каларӗ Купӑста Иванӗ.

— Ара, мур, намӑс курас мар ватлӑхра. Халиччен çыхланман доклад тавраш ӗпе. Хветӗр мана, эсӗ Автономи тунине астӑватӑн, ӗлӗкхи пурнӑç пирӗн ялта мӗнле пулнине пӗлетӗн, халӗ бригадир, отлично ӗçлетӗн, халлапа ӑста, терӗ те—килӗшрӗм.

— Пулӑшатпӑр сана. Эсӗ, Макар, малтан пирӗн ял ӗлӗк мӗнле пулни çинчен кала, кайран халь мӗнле. Кунта вара пурне те кала... Да, эсӗ ӗлӗк пирӗн ялта чиркӳ старӑстипе Карпун Куçук ывӑлӗсем анчах хут пӗлнине ан ман,—вӗрентет Яшка Давичӗ.

— Вӑл мар. Эсӗ пирӗн ялта ӗлӗк шкул та пулманни çинчен...

— Эсӗ ӗлӗк çӗрçирӗм килӗрен 90-шӗ çӗн тырӑччен сертепе пурӑнни çинчен... Так-так аса килчӗ, 50-шӗн ӗне пулман, 72-шӗн лаша...

— Чимӗр, чимӗр. Йӗркипе калӑр. Капла ни çырма çук, ни тавсӑрма,—хыпаланать Макар.—Черетпе калӑр! Сӑмах Ваçука паратӑп.

— Эсӗ унта, Макар, колхозра двигатель лартнине ан ман, кӗрпе тӑвакан, çу çапакан машинӑсене...

— Эй, стойӑр, стойӑр! Хут вӗренни çинчен. Акӑ халь эпӗ 56 çула карӑм. Хут вӗренни икӗ çул. Ман ачасем: Иван—врач, Петӗр—учитель, Укахви—акушерка...

— Сан анчах-и мӗн? Ман тата? Ман? Манӑнне çыр, Макар. Хветӗр—тракторист, Ваçлей—генерал...

— Çырас мар, генерал...

— Çыр, çыр. Генерал-лейтенант. Точнӑ...

— Апла пулсан, манӑнне те çыр. Ӗлӗк çемьере хут пӗлекен пулман. Халь пурте пӗлеççӗ. Ман арӑм ферма пуçлӑхӗ...

— Чимӗр, чимӗр. Ара ман кунта доклад пулмасть вӗт капла. Ялти çынсен списки пулса ларчӗ... Çитӗ...

Калаçса ларса сисмен те, кантӑкран тул çутӑлни те курӑна пуçланӑ. Макар çырнӑ хучӗсене хӑвӑртрах пуçтарса чикрӗ те пуçра план туса киле вӗçтерчӗ.

— Карчӑк, карчӑк! Тӑр-ха! Эсӗ илтмен-и, эпӗ доклад тӑватӑп вӗт? Пӑх-ха, ман хутсене. Халь Ваçук патӗнче турӑмӑр... Аха, эпӗ сана çырман вӗт! Тьфу! Пӑх-ха, такамсене те çырнӑ, сана çырман. Эсӗ чӑх-чӗп фермин бригадирӗ вӗт! Эсӗ, карчӑк, 1920 çулта миçе саспалли пӗлнӗ?..

— Мӗн пулнӑ сана? Мӗн аппаланан?

— Каларӑм вӗт, çирӗм çулта мӗнле çитӗнӳсем туни çинчен доклад тӑватӑп тесе... Кала, халех çыратӑп.

— Мӗн пӗлнӗ, ним те пӗлмен. Ара тӑватӑм çул пӗрле шкула çӳрерӗмӗр вӗт. Çавна та мантӑн-и?

— Тоттӑ,—терӗ те Макар хӑйӗн доклад тезисне çырма ларчӗ.

* * *

Темӗн чухлӗ тӑрӑшсан та Макар докладне итлеймерӗм. Вӑл кун эпӗ Шупашкара тухса кайрӑм. Анчах Макар докладӗнчен пит те тӗлӗнчӗç, тет. Вӑл доклад каярахпа хаçатра та пичетленсе тухрӗ.

**Н. Чурпай.**

## Ӗлӗк венчете кӗнине аса илни

— Халӗ пирӗн хулан ЗАГС-ӗ Карл Маркс урамӗнче, революциччен вӑл—музейра пулнӑ.

— Мӗн сӳпӗлтететӗн! ЗАГС ятлӑ учреждени революциччен пулман. Кам сана ЗАГС музейра ӗçленӗ тесе каларӗ?

— Асанне каларӗ. Паçӑр унпа эпир музей умӗнчен иртсе карӑмӑр. Вӑл каларӗ: мана çак çуртра ӗнтӗ асләçупа мӑшӑрлантарнӑ, терӗ.

# Вĕсем палканă хушăра...

(Çаплаччĕ вĕсем, чăваш халăхĕн хаяр тăшманĕсем).




**— Куратăр: большевиксен ĕç тухас çук, текенсем палкаса ăçта çитрĕç.**

---

## Паянхи чăваш ĕлĕкхи кĕнекере калани çинчен

— Ĕненекенсем валли 1875 çулта Питĕрте кăларнă „Краткое описаниие Михайло-Архангельского мужского монастыря, Казанской губернии, Козмодемьянского уезда" ятлă кĕнекере: „Ангелы на небеси ни женятся, ни посягают" (пĕлĕт çинчи ангелсем авланмаççĕ те, аскăн шухăшсене те тытмаççĕ), тесе суйнă.

— Вăл суя мар, тĕрĕс!
— Ăçтан тĕрĕс пулать?

— Çук ангелсем авланма та, аскăн шухăшсем тытма та пултараймаççĕ ĕнтĕ.

## Клентĕр

— Сана çак клентĕре çинĕ чух мĕн аса килет?

— Ĕлĕк революциччен хăшпĕр чухне пирĕн атте пасартан виçĕ клентĕр илсе таврăнатчĕ те ултă ачана валеççе паратчĕ. Шутсăр тутлăн туйăнатчĕ. Эпĕ вара шухăшлаттăмччĕ: патша ачисем клентĕр çисе çеç пурăнаççĕ пулĕ, теттĕмччĕ. Çав аса килет. Сана тата мĕн аса килет?

— Мана-и? Ĕлĕк капиталистсем турă сăнĕсемпе мĕнле услам туни аса килет. Клентĕрĕ-прибавочнăй стоимоçĕ капиталист аллине юлатчĕ, ĕççыннисене клентĕрĕн шăтăкĕсемпе „тăрантаратчĕç".

# Ӳлӗмхи хаҫатран

*Вырӑссен аслӑ писателӗ М. Горький хальхи ҫамрӑксене ӳлӗмхи ҫинчен шухӑшлама вӗрентме хушнӑ. Чӑваш автономийӗ 20 ҫул тултарас умӗнхи кунсенчен пӗринче эпӗ те ӳлӗмхи ҫинчен кӑштах шухӑшласа пӑхрӑм. Ленинла-Сталинла наци политикин хӑватлӑ ҫӗнтерӗвӗ уявне питӗ пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илекен чӑваш ҫӗршывӗнче ӳлӗм мӗн пуласси̇не хальхи хаҫатсенче пичетленекен заметкӑсем майлӑ ҫырса тухрӑм.*

*Паллах ӗнтӗ, пирӗн ӗмӗтсем эпӗ илсе кӑтартнӑ заметкӑсенче асӑннисенчен пысӑкрах. Эпӗ ӑна тӗплӗн тата пӗтӗмӗшпех ҫырса пама та пултараймӑп, мӗншӗн тесен пирӗн ӗмӗт, пирӗн ҫул малалла, коммунизмӑн ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсем патнелле!* **Иван Мучи.**

## Тӗнчери рекорд

Ӗнер Корнев инженер хӑй шухӑшласа тунӑ машина—быстроход ҫине ларса Ҫӗр тавра ҫӳреме тухса кайнӑччӗ. Паян ҫӳресе таврӑнчӗ вӑл. Ҫул ҫинче тӗнчери рекорда илнисӗр пуҫне нимӗнле происшестви те пулман.

## Баян—джазоркестр

Лебедев хушаматлӑ баянист универсальный баян шухӑшласа кӑларнӑ. Лебедев вӑл баянпа пӗчченех пӗтӗм джазоркестр вырӑнче ӗҫлеме пултарать. Лебедев юлташ вӑл баянпа паян чӑваш консерваторийӗн аслӑ залӗнче пысӑк концерт парать. Ресторансен управленийӗ Лебедева ыран каҫхине шыв айӗнчи ресторана пырса пӗчӗкҫӗ концерт парса кайма ыйтнӑ. Лебедев: сирӗн ресторанра кӑшт хӗрӗнкӗрех ҫынсем те хӑш чух пулкалаҫҫӗ, тесе пыма килӗшмен.



„Париж Коммунӗ" колхоз пучахӗ

★———— ————★

## Пирӗн апельсинсемпе лимонсем

Апельсинсемпе лимонсене пӗлтӗр чӑваш халӑхӗ нумай туса илчӗ, эпир ӑна Колгуев утравӗ ҫинче пурӑнакансем патне те чылай ятӑмӑр. Кӑҫал пӗлтӗрхинчен нумайрах пухӑнать. Ҫавӑнпа пирӗн апельсинсемпе лимонсене кӑҫал Вайгач утравӗ ҫинче пурӑнакансем патне те яма палӑртса хунӑ.



„Восход" колхоз кӑшманӗ.

★———— ————★

## Вӑхӑтсӑр ҫумӑр

Чӑваш республикинчи Орошени Управленийӗ ӗнер, июнӗн 22-мӗшӗнче, пирӗн Ишлей районӗн ҫӗрӗсем ҫине ҫумӑр каҫхине 11 сехетпе ҫурҫӗр хушшинче ҫутарчӗ. Ҫумӑр ҫутарассине малтанах пӗлтернӗ пулин те, хӑшпӗр гражданӑсем театӑртан таврӑннӑ чухне тӑхӑнма калуш илсе тухайман. Ҫумӑра ҫынсем ҫывӑрса пӗтсен, ҫурҫӗр иртсен 2 сехетпе 3 сехет хушшинче ҫутармалла тӑвасчӗ.

**Силин.**

## Кӗнеке палатинче ҫук

Магазинсемпе лавкасенче ӗлӗк жалоба кӗнекисем пулнӑ. Вӗсем ҫине ҫыракан нумай пулнӑ, теҫҫӗ. Ҫав коллективлӑ творчествӑ енӗпе пулнӑ авалхи кӗнекене эпӗ библиотекӑсенче те, музейра та, кӗнеке палатинче те тупаймарӑм. Ку ӗнтӗ пирӗн кӗнеке палатинче авалхи кӗнекесем ҫителӗксӗррине пӗлтерет.

Редакцирен: Кӗнеке палатине айӑплани тӗрӗс мар. Кӗнеке палати пичетленсе тухнӑ изданисене кӑна пухса пырать. Атӑл лешъенчи Текстилькомбинат территоринчен инҫетре мар ларакан „Чӑваш архивне" кайӑр. Унта „Жалобная книга магазина № 1, 1939 год" тесе ҫырнӑ кӗнекесене тупса парӗҫ.

## Тухтăр асăрхаттарни

Пирĕн „Шурăмпуç“ поселокра пурăнакан хăш-хăш çамрăксем (хушамачĕсене каламасан та пырĕ) сахалтарах çывăракан пулчĕç. Апла юрамĕ. Ĕçлеме юрататăн пулсан, канмашкăн та юрат. Сывлăхна упра!

Врач Налимов.

## Рецензи вĕçĕ

...Наукăпа Тĕпчев институчĕ кăларнă „Чăвашсен авалхи сăмахĕсен энциклопедийĕ“ тесе ят панă кĕнекен лайăх енĕçене кăтартнă хыççăн, çитменлĕхĕсене те кăтартма тивĕçлĕ. Пирĕн шухăшпа, вăл энциклопедине „уйран çÿпçи“, „çăраççи“, „вучах“ тата „примус“ сăмахсене те кĕртмелле пулнă.

Рецензент Иванов.

## Çурхи испытанисенчен

ИШЛЕЙ (хамăр корреспондентран). Ишлей районĕнче çурхи испытанире „посредственно“ илни пĕр ача çеç пулнă. Вăл ача Елмекассинчи вăтам шкулта 4-мĕш класра вĕренекенскер, Сатуров хушаматлă. Атăла Шупашкар тĕлĕнче хăш çулта пĕвелесе пĕтернине тата пĕрре аксан нумай çула пыракан тулла академик Цицин шутласа тупнине пĕлеймен. Çавна та пĕлейменшĕн Сатуров „посредственно“ илнĕ.

## Литературăпа искусство хыпарĕсем

**Çĕнĕ роман.** Çак кунсенче Чăваш издательстви чăваш писателĕ Космосăн 21 томлă çĕнĕ романне пичетлесе кăларчĕ. Ку романра писатель хăйĕн ытти 19 романĕнчи пек мар, чăвашсен ĕлĕкхи, 1940 çулсенчи пурнăçĕ çинчен çырнă. Роман томĕсене пурне те меловой хут çине пичетлесе кăларнă. Хамăрăн хаçатăн ыранхи номĕрĕнче вăл роман çинчен çырнă Бельвинский критикăн статьи тухĕ.

**Çĕнĕ опера.** Чăвашсен оперăпа балет театрĕнче ĕнер, июнĕн 23-мĕшĕнче, халăх нумай пулчĕ. „Марсианец кĕрÿшĕ“ ятлă оперăна кăтартрĕç. Оперăн Сольмажоров композитор çырнă музыкине халăх питĕ ырларĕ. Вăл театăртах „Улăп“ ятлă оперăна ыран 200-мĕш хут лартаççĕ.



**СССР халăх артистки Самойлова чăваш драматургĕ Солнцев çырнă „Авалхи“ ятлă пьесăри Варвари ролĕнче (Мускаври Худ. театр).**

## Пулни-иртнисем

*Хула тулашĕнче ларакан пĕр учреждение бюрократла ĕçлекене тупнă. Çак авалхи чирпе аптранă çынна васкавлă пулăшу панă.

*Ĕнер ирхине 10 сехет те 20 минутра пассажирский стратостат çине лараймасăр юлнă Гималайский хушаматлă çын çĕртен уйăрăлса каякан стратостатăн çунаттинчен тытса чупнă чухне аллине ыраттарнă. Кун пек культурăсăр çынна курманни нумай пулать, теççĕ ватă çынсем.

*Ĕлĕк Çĕрпÿ пасарĕ пулнă вырăнта ĕçлеçен геологсен бригади çĕр айĕнчен икĕ мăшăр çăпата тупнă.

*Йĕпреçри Химкомбинатра ĕçлекен рабочи Добросмыслов Инçет-Хĕвелтухăçĕнче ĕçлекен ывăлĕ янă çырăва тавлăк çурăран тин илнĕ. Çырăва çул çинче нумай тытса тăнăшăн айăплисене ответ тыттараççĕ.

## Редакцине килнĕ çыру

*Хисеплĕ редактор юлташ!*

Манăн ĕçĕмсене критикленĕ юлташсене, вырăнти организацисен представителĕсене, мĕн пур хаçат редакцийĕсене тата ăраснах „Капкăн“ журнал редакцине сирĕн хаçат урлă чунтан-чĕререн тав тăватăп.

Солонцев.

## Тÿрлетни

Вулакансем каçарăрах: пирĕн хаçатăн ĕнерхи номерĕнче пĕр йăнăш кайнă: „Шупашкар хулинче 1938 çулта 30 пин çын пулнă, кăçал 170 пин çын“ тенĕ. Ăна тÿрлетсе „кăçал 180 пин çын“ тесе вуламалла.

Юлашки 10 çул хушшинче пирĕн хаçатра пĕр йăнăш та пулманнине кура, вулакансем каçарасса шанатпăр. Пĕлтерхи цифрăна кăçалхи тесе шутласа çырнă сотрудника ятларăмăр.

Редакци.

## Пулас пĕлтерÿсем

Пичет çуртне ĕнер Володарский урамĕнчен Кузнечнăй урама куçарса лартрĕç. „Капкăн“ журнал редакцийĕн адресне малашне çапла çырăр: Кузнечная ул., д. 72. Дом печати 2-ой этаж. Комнаты 7-8-9-10-11.

**Сывалма Хура тинĕс хĕрринчи курортсене каякансене пĕлме.**

Шупашкартан Хура тинĕсе тухакан пароходсем çине ларса каяс текенсем билетсене „Бюро поручений“ урлă илме пултараççĕ. Адресĕ çакă: Ленинградская ул., д. №39. 10-ый этаж. Телефон: Д-3-33-57.

# ĂМĂРТУ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ

Тутар тата Чăваш республикисем 4 çул хушши ĕнтĕ пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçленине икĕ республикăри пур ĕççыннисем те лайăх пĕлеççĕ, Хабибулла Сабирьяновпа Иван Платонов 20 çул хушши ăмăртса ĕçленине пĕлекенсем питĕ сахал.

Вĕсем иккĕшĕ те кӳршĕллĕ ялсенче чухăн хресчен çемьисенче пĕр çулта çуралса ӳснĕ. Ашшĕ-амăшĕсем авалтанах пĕлĕшсем пулса пурăннă. Хабибулла ашшĕн пĕр качака тата пĕр сурăх пулнă, Иван ашшĕ лаша тесе ят панă, анчах хӳрипе çилхине пăхсан çеç лаша евĕрне килекен чĕрчун тата пĕр-икĕ чăх усранă.

20 çул каярах май уйăхĕнче Пăва хулинчен Хĕвеланăçри фронта, белополяксене хирĕç çапăçма, Хĕрлĕ çарăн çĕнĕ отрядне организацилесе янă. Çав отрядра Хабибуллапа Иван та пулнă.

— Ну, Иван иптешĕм, пĕрле ӳсрĕмĕр, малашне те пĕрле пулăпăр,—тенĕ Хабибулла.

— Çапла ĕнтĕ, чăн çывăх юлташсем пулăпăр,—килĕшнĕ Иван. Нумай та вăхăт иртмен, Белоруссири пĕр хула çывăхĕнче Хĕрлĕ çар чаçĕсем белополяксен пысăк отрядне çĕмĕрсе тăкнă та малалла хăваласа кайнă. Иванпа Хабибулла та малтанхи çапăçурах хăйсен паттăрлăхне кăтартса панă. Красноармеецсен митингĕнче комиссар боецсене мухтаса хĕрӳллĕ сăмах каланă.

— Куратăр ĕнтĕ, мĕн тери вăйлă эпир, мĕншĕн тесен эпир хамăр çĕршыври пур халăхсем те тăван çĕршыва сыхлама пĕр çын пек тăтăмăр. Акă пирĕн чаçре вырăссем, украинецсем, белоруссем, тутарсем, чăвашсем тата ытти халăх çыннисем те пур,—тенĕ вăл.

— И-ий, батька, тутар халăхне те мухтать, эпир начар халăх мар иккен, малашне тата матур пулас,—тенĕ Хабибулла хăйĕн ăшĕнче.

— Хă,—чăвашсене самаях мухтать. Вот епле. Апла пулсан маххă парса чăваш ятне ярас мар,—тенĕ Иван та.

Тепĕр икĕ эрнерен политрук, красноармеецсемпе калаçу ирттернĕ чухне, ВЦИК Тутарсен автономлă республикине тăвасси çинчен йышăннă декларацине вуласа панă.

— И-и-и, Иван, куратăн-мĕ, тутарсене мĕнле пысăк права параççĕ, никак республика тенĕ.

— И-и-и, мĕн калама,—тенĕ Сабирьянов, Иван умĕнче мухтанас кăмăлне пытараймасăр.

Нумай та вăхăт иртмен, Иван Хабибулла патне вĕçтерсе пынă.

— Хабибулла тусăм,—Во-о!—тенĕ вăл. пуç пӳрнине кăтарса.

— Несте, туганăм?

— Чăвашсене Автономлă облăç туса панă.

— Ну, чăнах-мĕ?

— Чăн чăнах хаçат çине пичетлесе кăларнă.

— Питĕ якши, Иван, питĕ якши. Халĕ ĕнтĕ сирĕн те, пирĕн те автономи пур.

Вĕсем ку сăмах мĕне пĕлтернине ун чухне тĕпĕ-йĕрĕпех пĕлмен, анчах вăл пысăк чыс тата хисеп пулнине лайăх туйнă. Çав кунранпа иккĕшĕ те пĕр-пĕрин ĕçне сăнаса пыма тытăннă. Иван чăваш халăхĕн ятне, Хабибулла тутар халăхĕн ятне çӳлтен çӳле çĕклеме тăрăшнă. Вĕсенчен пĕрне командирсем благодарность парсан, тепри хăй благодарность иличченех канлĕ кăмăлпа çӳреймен.

Хĕрлĕ çар Врангĕле Хура тинĕсе сирпĕнтернĕ хыççăн Иванпа Хабибулла хăйсен килĕсене таврăннă. Шăпах вĕсен ялĕсен хушшипе Чăваш облаçĕпе Тутар республикин чикки иртсе кайнă.

— Вот, Иван, ĕлĕк те кӳршĕсемччĕ, халĕ ĕнтĕ ахтономлă кӳршĕсем пултăмăр,—те ĕ Хабибулла.

Пĕр икĕ çул иртсен вĕсене иккĕшне те ялсовет членĕсене суйланă.

— Хĕрлĕ Çарта унран кая юлманччĕ ниушлĕ халĕ вăл манран ытлашши иртсе кайĕ,—тесе шутланă Иван.

— Конешнă Иван матур çын, анчах эпир те хамăр ята çĕртекенсем мар,—тенĕ Сабирьянов та. Ун чухне вĕсем ăмăрту сăмах çинчен те илтмен, анчах Иван Хабибулла ĕçне, лешĕ унăн ĕçне пĕр таттисĕр сăнаса тăнă.

Ленин—Сталин партийĕн чĕнĕвне йышăнса миллионшар хресченсем колхозсене пĕрлешме тытăнсан, Хабибуллапа Иван пĕри тепринчен малалла ĕлкĕрес тесе, пĕрне пĕри систермесĕр колхоза кĕнĕ пулнă. Малтанхи çулах вĕсене колхоз председателĕ пулма суйланă.

Çапла вĕсем, икĕ республика хушшинче официаллă йĕркепе социализмла ăмăрту договорĕ тăвиччenex, „маххă парас мар" шухăшпа ĕçленĕ. Совет халăхĕн аслă праçникĕсенче Сабирьяновсем Иван Платоновсем патне хăнана пынă, çăкăр-тăвар хире хирĕç йăлапа хăйсем патне илсе кайнă. Пĕрпĕрин обществăллă хуçалăхĕсемпе, ĕçĕсемпе паллашнă, çĕнĕ çитĕнӳсем тума суннă. Анчах пĕр-пĕрин патĕнчен хăнаран таврăнсанах Хабибуллаcем хăйсен колхозĕнче Ивансен ялĕнче çуккине, Ивансем хăйсен кӳршисен çуккине туса хурасси çинчен шухăшлама тытăннă. Пĕрре çапла, Сабирьянов хăй патне хăнана пырсан, Иван ăна колхозри ача çуратмалли çурта кăтартма ертсе кайнă.

— Ăста ертсе каятăн эсĕ мана?—интересленсе ыйтнă Хабибулла.

— Çитсен курăн-ха,—тенĕ Иван.

Вăл çак çĕнĕ учрежденине курсан Сабирьянов тĕлĕнсех кайĕ тесе шутланă. Анчах ача çуратмалли çурта çитсен Хабибулла мар, Иван хăй шалтах тĕлĕнсе кайнă,—унăн кӳрши ку учреждени çине, хурал пӳрчĕ çине пăхнă пек, нимĕн интересcăрах пăхнă.

— Аван япала ку, Платонов юлташ, анчах пĕчĕкрех: икĕ койка çеç вырнаçать. А вот эпир ултă койкăлăх турăмăр, малашне ял ӳссе пырать вĕт. А сирĕн парикмахерская пур-и?—сасартăк ыйтнă вăл.

Иван нимех те ответлемен, мĕншĕн тесен кун çинчен вăл асра та тытман пулнă.

Икĕ республика хушшинче социализмла ăмăрту договорĕ туса çирĕплетсен, Сабирьяновпа Платонов ертсе пыракан колхозсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме йышăннă. Икĕ республикăра, анчах кӳршĕллех ларакан колхоз членĕсем чăн малтанхи хут пĕрлешӳллĕ пуху туса ирттернĕ.

Çул хыççăн çул иртет. Тăванлă республикăсемпе пĕрле икĕ кӳршĕллĕ колхозсем те çаплипех ăмăртса ĕçлеççĕ, куллен кун ӳсеççĕ. Анчах Хабибулла Сабирьяновпа Иван Платонов малтанхи

çулсенчи пек кун сиктерсе тел пулаймассе. ВКП(б) XVIII-меш съезче хыççан весем иккешe те парти ретне кене. Выранти советсен суйлавесенче иккешне те Райсовет депутатне суйлана. Иван Платонова выдвижени йеркипе МТС-а еçлеме куçарна. Хабибулла Сабирьянов Райсовет Исполкомен председателен заместителе пулса еçлет.

Ике автономла республикасен юбилейесене чысласа куршелле колхоз членесем пысак праçник туса ирттереççе. Хана керекин варрине ытти хисепле ханасемпе перле Хабибулла Сабирьяновпа Иван Платонова лартна. Çене председательсем уява пуçласа, социализмла амартун итогесем çинчен каласа кататтаççе.

— Иван,—тет Хабибулла, ана хуленчен тексе,—эпир амартса еçлеме пуçлани чылай пулать никак?

— Аха, тинех туррипе калама тивет. 20 çул вет!—тене Иван хыттан кулса.

— А малалла?

— Амарту малалла пырать!

**Никита Волков.**

# ХАКЛА ÇЫРУ

Тимка мучи йывaç çуменче севенсе тарса çаваренчен кавак шупка табак тетемпе çерелле вараман версе илет. Председатель пухава уçасси çинчен пелтерче. Çак вахатра Тимка мучине письмоносец пысак таваткал çыру тыттарче. Мен тери хепертере вал уншан! Çырава алла илсенех турех тарса килелле танкаре, тиренсе каяс пек васкаса утре.

—Тимка мучи, а Тимка мучи! Пуху петермесер менле саланмалла,—кашкарчеç ана пухурисем.

—Табак хутаççине манса хавартан,—кашкарче тепри.

Çук, Тимка мучине халхана та кемест. Пухурисем унан табак хутаççине, кайран шырама киле тесе, сетел çине, пуху президиуме умне хучеç. Пуху кун йеркинчи ыйтава—Чаваш автономийе 20 çул тултарнине менле еçсемпе палартса хаварасси çинчен сутсе-явать. Калаçсан, калаçсан печек перерыв пулче. Çав вахатра:

„Тимка мучи табак хутаççи шыраса килет",—тере пери. Халах ахалтатса яче.

—Пытарса хурар-ха, пере ширатар, тереç хашперисем.

—Çук апла мар, пухура печек доклад тутарар, кайран парапар,—шут туреç теприсем.

Тимка мучи хашкаса çитре, халах шапланче.

—Карчаку каялла пухава хуса ячи мен?—тере Матви

—Çук... темскер çухатна-ха вал,—тесе астуса илтересшен пулчеç хашесем.

Тимка мучи нимен те ана-кана чухлаймаре. Унтан Петер колхозник юриех:—Тимка мучи, санан табак лайах, хаяр теççе, кур-ха туртса пахар, тере.

—Турттарас, турттарас. Мур хуплатар пуçна, киле хавартам пулас, çумра çук,—тере Тимка мучи кесйисене ухтарса.

—Акку мен,—тере председатель хутаçça илсе катартса,—анчах ахаль парас мар тереме́р, пер „печек доклад" тутарас тереç сана. Мен те пулин çинчен тухса калаçа пар ente,—тере председатель.

—Пухусенче тухса калаçма челхи манан мака çав, веренмен. Эпе сире хаман Херле Çартан яна ывалан çырупе паллаштарсшан, ывалам пите хакла çыру яна. Унта вал пурне те çырна. Ака вал,—тере те вулама пуçларе. Пухури халах шап пулса итлеме тытанче.

—„Мана Совет правительстви Финлянди шур бандичесемпе хастар çапаçнашан орден паче. Эпе хале орденоносец. Таван çершыва яланах çирeп сыхлама эпе хатер. Сире те çавнашкалах хамар колхоза çирепле́тме ченетеп", тенине илтсен халах ала çупса яче.

—„Пирен колхозсем мен чухле çиреп, пуян, çаван чухле колхозниксен пурнаçе пуянланать, унпа перле Херле Çара çиреплететпер. Юратна атте, колхозра çамраксене пример катартса пыр".

—Терес калать, çаван пек кирле.

—Херле Çартан ав мен çыраççе.

—Тав сана, ку çырава пире вулаттарнашан. Эх, епле пите терес калана.

—Çаван пек пулас пулать пурин те,—тене сасасем илтенчеç пуху хушшинчен.

—Тимка мучин ывале çырyне хиреç колхозниксенчен çыру ярас.

—Ярас! Ярас!!! Пурте ал пусатпар.

—Чаваш автономийе 20 çул тултарна ятпа пулакан уява килме ченес.—Пурте ал çупма пуçлареç. Тимка мучи хай те саванса ал çупре.

Тимка мучин орденла ывалне мухтаса малалла колхоза тата ытларах пуянлатса ярас хастарла ěметпе колхозниксем килесене саланчеç.

**А. Сорокин.**



***— Ака куратар: чаваш националисчепе ют çершыври капиталистан челхи перре пулна.***




— „Совет Союзĕ—государство мар, географиллĕ ăнлав çеç" тесе сӳпĕлтетсе пăхнă господасене аса илсе кулатпăр... Ав экран çинче вĕсенчен пĕри: кирпĕч çамкалли...

## Икĕ ача

— Пирĕн çемьере пурте Октябрь ачисем пулса тăраççĕ.

— Пурте мар.

— Ма пурте мар? Пиччепе аппа, йăмăкпа шăллăм тата эпĕ Октябрь хыççăн çуралнăскерсем. Аппапа пичче—комсомолецсем, йăмăкпа эпĕ—пионерсем, шăллăм—октябренок.

— Тата аçупа аннӳ пур.

— Вĕсем те Октябрь ачисем.

— Аçтан вĕсем, революцичченех çуралса ӳснĕскерсем, халĕ ача ашшĕ-амăшĕ пулнăскерсем, Октябрь ачи пулма пултараççĕ?

— Колхозниксем-çке вĕсем. Колхозниксем те Октябрь ачисем пулаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Октябрьччен пулман.

## Сутмалли юмахсем

### (Йăларан тухнă япаласем çинчен)

*1. Ытти çынсемшĕн вăл—хăма,*
*Ĕненекеншĕн—кĕлтума.*
*(Икона)*

*2. Вĕçĕмсĕр суять,*
*Суйнипе пуять.*
*(Поп)*

*3. Ăслă çыншăн—юмах,*
*Айваншăн—чăн сăмах.*
*(Библипе евангели)*

*4. Пушă пуçĕ пĕтĕмпех*
*Сĕрĕмленнĕ тĕтĕмпе.*
*(Баптист)*

*5. Пулман та, халь те çук,*
*Ĕненнĕ ĕлĕк чух.*
*(Турăпа шуйттан)*

**Ф. ВАНИН.**

## 340.640 пăт

Чăваш автономийĕ 20 çул тултарнă кун, демонстрацирен таврăнсан, ашшĕ-амăшĕпе тăванĕсем чей ĕçсе тухиччене крандаш илсе хут çинче темĕскер шутласа ларать Ваня пионер. Шутланă хушăра сехет çине пăха-пăха илет. Юлашкинчен чăтаймасăр тăванĕсене:

— Ой-ой эсир!—тет.—Эпĕ паçăрах ĕçсе тăрантăм, эсир халĕ те ĕçсе ларатăр. Шăп 20 минут иртрĕ. Эсир чей ĕçсе ларнă вăхăта миçе пăт тырăпа танлаштарма пулать? Каласа пама пултаратăр-и?

— Мĕн сӳпĕлтететĕн? Вăхăта тырăпа мĕнле танлаштарма пулать?

— Эсир чей ĕçсе ларнă вăхăта-и? Пулать.

— Мĕнле?

— 15.237 пăта 20 хут илтĕм те, 304.640 пăт тухрĕ.

— Ма апла? Ăçтан илтĕн вунпилĕк пин те... ă-ă-ă...

— 15.237 пăта-и? Итле. 1942 çулта Совет Союзĕ 8 миллиард пăт тĕштырă туса илĕ. Çĕрĕçне çĕрĕн—кунĕн çулталăкĕпех туса пынă пек илсе шутласан та, ку вара Совет çĕршывĕ кашни минутрах 15.237 пăт тырă туса илесси пулать. Пĕр минутра 15.237 пăт! Чей ĕçсе эсир 20 минут irttertĕр. Эсир чей ĕçнĕ хушăра Совет Союзĕ 304.640 пăт тырă туса илĕ.

## Сиввĕн калаçакансем

— Пĕрре ĕлĕк, Чăваш автономийĕ пуçланнă çулсенче, эпĕ чăваш националисчĕсем вырăс пролетариачĕ ертсе пынипе каякан чăваш халăхĕ çинчен шутсăр сиввĕн калаçса ларнине илтрĕм.

— Питĕ сиввĕн тетĕн?

— Сиввĕн çав. Вĕсем калаçса ларнă пӳлĕмре Реомюр термометрĕ пулнă пулсан, унăн ăшĕнчи ртуть пĕтĕмпех анса ларатчĕ пулĕ.

## Килес çул Шупашкарта

— Авалхи тĕшмĕшлĕ çынсем каланă: пушша хирĕç пулсан, телей пулмасть, тенĕ. Эсир пурăнакан пысăк çуртран пушă витре йăтса шыв ăсма каякана курмарăм. Ку мĕне пĕлтерет?

— Хулара водопровод лайăх ĕçленине пĕлтерет.



— Акă телейлĕ халăхсен социализмла çĕршывĕ çине тапăнма тăнă тăшмансен юлашкисем. Социализмла пахчана кĕме хăйсан ӳлĕм те вĕсене пурăнма памăпăр...

# Архивран

## Çăхан куçне çăхан чавмасть

Мăн çул çинче пуçтарăнчĕç
Çичĕ мужик пĕрле...
Пуçтарăнчĕç те тытăнчĕç
Хĕрÿллĕн тавлашма:
Русь çĕрĕнче кам пурнăçĕ
Хаваслă та тулли?
Роман калать: помещикăн,
Демьян калать: чиновникăн,
Лука калать: попăн...

Хăшин сăмахĕ тĕрĕс пулĕ тетĕр эсир, вулакан юлташсем? Лука старикĕн иккен! Акă Чăвашсен Центральнăй Архив Управленийĕнче усранакан 2888-мĕш №-лĕ дело тăрăх, 1850-мĕш çулта Улатăр уездĕнчи Дубенки ятлă ялта çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Поп Золотницкий Петровка ялĕнчи С. Е. ятлă вунсакăр çулхи хĕре тарса тытнă. Вара С. Е. халиччен „хĕр халлĕн" пурăннине пĕлсен, ăна „хÿтĕлесе пурăнма" пулнă. Пĕррехинче арăмĕ тухса кайсан, поп Золотницкий пÿлĕм тасатма тытăннă С. Е. патне кĕрет те, ăна хăйпе „пурăнма" ÿкĕтлеме тытăнать. Хĕр килĕшменнине кура, поп Золотницкий ăна хăтăрса пăрахать. Вара „...эпĕ çĕçĕ çавăрса илтĕм те „хамăн хĕрлĕхе çухатиччен луччĕ хама хам пĕтерем" терĕм. Поп манăн çĕççе туртса илчĕ, итлемесен эпĕ çурăмăнтан пиççиллĕх касса илетĕп, тесе хăратрĕ. Унтан мана ярса илсе, аскăн ĕç турĕ". (Хĕр панă жалобăран).

Чĕмпĕрти Уголовнăй палата ку ĕç пирки çапла йышăннă: „Золотницкий священника ку ĕçрен хăтарас, хĕрне, С. Е.-на, аскăн ĕçсем тунăшăн, ирĕксĕр чиркĕве çÿреттерсе çылăх касарттарма хушас (предать церковному покаянию)".

Куртăр-и, мĕн пулса тухрĕ? Ахаль каламаççĕ иккен çăхан куçне çăхан чавмасть тесе.

Патша пурнăçĕ Золотницкий поп пурнăçĕнчен урăхларах пулнă иккен. Акă, Чăваш Архивĕнчи 1187-мĕш №-лĕ документ тăрăх, патшана кашни кĕтесрех тенĕ пек, хресченсем ашшĕ-амăшĕсен ячĕсене асăнса ятланă.

Помещиксен пурнăçĕ попсенчен те лайăх пулнă иккен. Апла пулсан çÿлте асăннă Романăн сăмахĕсем те тĕрĕс. Акă Улатăр хулинче пурăннă помещица Соколова, Чăваш Архивĕнчи 1990-мĕш №-лĕ хутсем пĕлтернĕ тăрăх, 1840—42-мĕш çулсенче хăй аллипе темиçе çынна çапса, хĕнесе вĕлернĕ. Тĕпченĕ хыççăн çакна тупнă: Соколова помещица вĕлернĕ пĕр хĕрĕн „...хăлхи хыçĕнче юн чăмăрккисем хыта-хыта ларнă, пичĕ ырханкка. Пуç тÿпинче вунă пус пысăккĕш шыçă тата сылтăм хăлхи хыçĕнче кăвакарнă йĕрсем пулнă" т. ыт. те.

Соколова помещицăна айăплама фактсем çителĕклех пулнă ĕнтĕ. Анчах та суд унăн тискер ĕçĕсене асăрхаман. Акă приговор:

„Г. Соколовăна хăй тĕллĕн çынсене асаплантарса вĕлерни ырă хĕрарăма килĕшменнине асăрхаттарса хăварас".

## Хаклă каютăра ларса çÿрекен икона

„Шăп çурçĕр çитнине пăхмасăр, Сĕнтĕрвăрринче святой иконăна пĕтĕм вырăнти пуп тваршсем крестный ходпа тата чансем çапса кĕтсе илчĕç. Икона хăйсен килĕсене кĕртес текенсем Сĕнтĕрвăрринче те, Шупашкарпа Чикмере те нумай пулчĕç. Вырăнти халăх святой иконăна çав тери хисеплесе йышăнассинех кĕтменччĕ эпир. Пароходсем çинче укса тÿлеттермесĕрех ăна питĕ килĕшÿллĕ каютăсем пачĕç".

(„Краткое описание Михайло-архангельского мужского монастыря Казанской губернии, Козмодемьянского уезда". С. Петербург 1875 г.).

## Ыйткалама тухса кайнă шкул

„Шупашкар хула управине
Шупашкарти чирку-приход шкулĕнчи учительсенчен.

Укса-тенкĕ пит кирлĕ пирки, эпир управăран вăл пирĕн чухăн шкула тытса тăма, иртнĕ çулхисем пек, хĕрĕх (40) тенкĕ те пулин пулăшу памалла тума пултараймĕ-ши тесе тархасласа ыйтатпăр".

(Чăваш архивĕн материалĕсем. 1904 çул.)

## Тархасшĕн витре илсе пар

Хула управине масар çинчи чавсанайри çак çитменлĕхсем çине çаврăнса пăхма тархаслатăп:

1. Çын касмалли сĕтел пăркаланать, çурăклă, юнсене тата шĕвексене юхтарма вырăн çук, юхакан шĕвеке пуçтарма витре те çук.

2. ...фельдшерăн клеенкăран тунă çакăлă сапун çук, кунашкал сапун çын каснă чухне питĕ кирлĕ.

Шупашкар уездĕнчи врач ĕçĕсене тăвакан Покровский" (Чăваш архивĕн материалĕсем. 1904 çул.).

## Мăшăрланма ирĕк пар

„Ваше Высокородие, сирĕнтен пуç тайса ыйтма тивĕçлĕ пуласчĕ, закон тăрăх пире мăшăрлă пулма ирĕк пама ¸мăй тупаймăр-ши.

Вăрмарти начальнăй училище учителĕ (алпуснă).
Вăрмарти начальнăй училище учительници (алпуснă).
1915 çулти июнĕн 24-мĕшĕ".

Çĕрпÿ уездĕнчи халăх училищисен инспекторĕ: „разрешаю" тесе резолюци хунă.

(Чăваш архивĕн материалĕсем).

## Çын çÿрекен çул çине кĕпер хывма кирлĕ мар

Шупашкар уездне кĕрекен Кĕчкей вулăсĕнчи Услăх ялĕн çыннисем 1911 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче Шупашкарти земский управăран мăн çул урлă юхакан Кĕнер шывĕ урлă кĕпер хывса пама ыйтса приговор йышăннă. Приговор çине Шупашкарти земский управа членĕ Г. Е. Ефремов çапла резолюци хунă: „Икĕ ял хушшинчи çул—ял çулĕ шутĕнче тăнăран тата вăл çулпа çав ял çыннисем çÿренĕрен кĕпер хывма кирлĕ мар".

(Чăваш архивĕ).

## Çынсем çÿретчĕр тесен—кĕперсене пăсмалла

„Етĕрне уездĕн земский управине.

Кăçалхи майăн 6-мĕшĕнче ирхине 9 сехет тĕлĕнче Çĕрпÿпе Етĕрне хушшинчи трактпа кайнă чухне эпĕ Туканаш ялĕнче кĕпер хăрах енелле чалăшса кайса ишĕлес пек тăнине асăрхарăм, çавăнпа эпĕ вăл тракт тăрăх çÿреме май пултăр тесе, кĕперне васкасах пăстартăм".

Управа председателĕ (алпуснă).

(Шупашкар уездĕн земский управа хучĕсем. 1906 çул. Чăваш архивĕ).

---

## Çĕнĕ пословицăсем

*1. Колхоз лашине пушă кирлĕ мар.*
*2. Аçта колхоз—унта пурлăх, теççĕ.*
*3. Растратчикпе йĕкехÿрене склад яхăнне ямалла мар, теççĕ.*
*4. Кахала ĕçкунĕ ĕçлеме вĕрентнĕ.*
*5. Ĕçкунĕ сĕтел çине хăй тĕллĕн килмест, теççĕ.*
*6. Колхоз пÿлми ĕмĕр тулли тăрать, теççĕ.*
*7. Ворошилов сулнă хĕçе чул юпа та чăтайман.*
*8. Совет чиккине çапăннă тăшманăн пуçĕ саланнă.*

В. Бараев *çырса илнĕ.*

# М Ĕ С К Ĕ Н

Тавлашу хĕрсе çитнĕ вăхăтра пырса кĕнĕ вăл. Тавлашакансем икке уйăрăлнă.

— Çĕр выртма кĕртетĕр-и?—ыйтнă вăл.

Лешсем ăна асăрхаман, тавлашма чарăнман.

— Çичçĕр аллă!—тесе кăшкăрнă пĕрисем.

— Çичçĕр вăтăрпиллĕк!—тенĕ теприсем.

— Эсир пĕлместĕр,—тенĕ пĕрисем.

— Хăвăр пĕлместĕр,—хирĕçнĕ теприсем.

— Çĕр выртма кĕртетĕр-и?—ыйтнă тепĕр хут хайхи çын.

— Кĕрĕрех... Выртса кайăр. Кунтарах иртĕр. Акă пукан. Килсе лар,—тенĕ килхуçи, унтан килнĕ çынна вăл аллинчен ярса тытнă та каланă:— Акă çĕнĕ çын. Унтан ыйтăр. Вăл татса парĕ. Вара кам тĕрĕсне курăр.

— Ма мана „çĕнĕ çын" тетĕн? „Çĕнĕ çын" тесе качча тухнă çынна калаççĕ пирĕн. Эпĕ качча тухман. Арçын эпĕ,—шӳтлесе хирĕçнĕ хватер ыйтаканни.

— Шӳтпе мар кунта. Эпир хумсем пирки тавлашатпăр. Кала-ха: çичçĕр вăтăрпиллĕк-ши, çичçĕр аллă-ши?

— Çичçĕр аллă та, çичçĕр вăтăрпиллĕк те мар,— тенĕ килнĕ çын канлĕн.—Каçпи тинĕсĕ çинче те, Хура тинĕс çинче те хумсем ун çӳллĕш пулмаççĕ.

Пӳртрисем сывлăша кисрентерсех кулса янă.

— Тинĕс хумĕ мар, радио хумĕ çинчен калаçатпăр. Коминтерн станцин хумĕ пирки...

— Унăн çӳллĕшне пĕлместĕп вара, манран ан ыйтăр,—тенĕ лешĕ.

— Мĕнле пĕлместĕн вара? Килте радио çук-им сирĕн?

— Çук çав,—тенĕ пуçне силлесе хайхи çын.— Пирĕн Торин-касси ялĕнче радио никамăн та çук.

Тавлашакансем пĕрпĕрин куçĕнчен чăр пăхса илнĕ. Килхуçи арăмĕ пукан çине кутăн кайса ларнă. Ыттисем хайхи çын çине пăха-пăха илсе пăшăлтатса калаçнă.

— Кала-ха,—тенĕ хайхи çынна хĕрхеннĕ сасăпа пĕр ватăрах хĕрарăм?—Пуçу ыратмасть-и? Темĕскерпе лĕпкӳнтен тирнĕн туйăнмасть-и?

— Ăс-тăн чирĕсене пĕлекен тухтăра пăхтарма шухăшу çук-и?

— Тăванусемпе хурăнташусем хушшинче ăсран тайлăккисем пулман-и?

Ыйту çине ыйту пама тытăннă тавлашакансем ăна. Хăйне ăсран тухнă çын шутне хунине сисмесĕр хайхи çын кусем çине тĕлĕнсе пăхнă, ним те чĕнмен.

— Мĕскĕн! Хăй ватах мар тата,—тесе пăшăлтатса илнĕ пĕр хĕрарăм хăйĕн юлташĕпе.

— Пире чăмлама тытăнсан...

— Çук, урайман халь. Сипленмесен уратех пулĕ.

— Тухтăра чĕнсе килес мар-ши?—тенĕ пĕри шăппăнтарах.

Çакна илтсен, хайхи çын пӳртрен хăвăртах тухса шăвăннă, лешсем шанках хытса юлнă.

Пӳртрисем чӳрече витĕр пăхса ăсатнине асăрхасан, хайхи çын çапла шухăшласа илнĕ:

— Кусем мана чăнласах ăсран тайлăк çын вырăнне хураççĕ. Радио итлемесĕр пурăнакан çын хальхи вăхăтра çук, теççĕ пулмалла. Ытти ялсемпе колхозсенче çук пулĕ-и тен те, пирĕн Торинкассинче пурах-ха,—тенĕ вăл.

И.



Халăхăн юнлă тăшманĕсене суд скамьи çине лартса хăйсене тивĕçлине веçех тупса патăмăр.

Секретарь и вып. редактор И. Илларионов. Отв. редактор Р. О. Малютин.

Сдано в производство 5/VI-40 г. Подписано к печати 22/VII-40 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 2007. Заказ № 405.

Формат бум. 58×84 1/8. Объем 2,5 п. л. Тираж 8700 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ", г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР.

Хаке 30 пус




Нумай нациллĕ совет халăхĕ хăйĕн чиккисене çирĕп çăрапа питĕрнĕ. Ун урлă каçма хăтланакан кашни тăшманах йытă вилĕмĕпе вилĕ.